Малта пыракансем патĕнче

# Çĕнĕ техника – тухăç тикĕсĕ

Хăвăрт аталанакан пурнăçра пурăнатпăр. Ĕлĕкех те мар ял хуçалăхне механизацилесси пирки калаçатчĕç, çывăракансене çӳллĕ трибунăсем çинчен питлетчĕç. Кайран çерем çĕрсем уçрăмăр, пусă çаврăнăшне тата агротехнологисене пăхăнса тыр-пул тухăçне 30-40 центнера, çĕр улми тухăçне 200-300 центнера е ытларах та, ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăма 5 пин килограмм урлă каçартăмăр т. ыт. те. Мĕн тунипе лăпланни каялла утăм туни пулнине пурте пĕлетпĕр пулсан та, паян кахал çын çеç çĕнĕ технологисемпе наци проекчĕсем пирки калаçмасть, вĕсене пурнăçа маларах кĕртсе çĕнĕ ӳсĕм картлашкисене пусмасть.

«Вăхăта хакламалла, çынсемшĕн ĕçлемелле», – пĕтĕмлетсе асăрхаттарать Президентăмăр республикăмăр аталанăвĕшĕн ĕçлекенсене. Çакна шута хурса ĕçлекенсем пирĕн районта пур. Вĕсенчен пĕри – «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ.

– Паян ял хуçалăхĕнче ĕç параканăн ĕçлекенсене тивĕçлĕ ĕç условийĕсем туса памалла тата пурин те пĕрле пулса ял хуçалăхне пысăк технологисен никĕсĕ урлă индустриализацилесе ял хуçалăхĕнче, апат-çимĕçпе çăмăл промышленность предприятийĕсенче, стройкăсенче алă вĕççĕн пурнăçлакан ĕçсене пĕтĕмпех çĕнĕ технологипе механизацилесе ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, – терĕ ытлашши калаçмасăр «Герой» хуçалăхăн тĕп инженерĕ В. Леонтьев. Унăн сăмахĕсене хирĕçлеме çук. Çиччĕ виççе каланăскерсем вĕсем.

Пĕр çанталăк условийĕсенчех иртнĕ кĕр кунĕсенче эпир «Герой» хуçалăхра ятарлă бригада техникăна управа лартассипе ĕçленине тĕл пултăмăр. Çакă мар-и-ха вăл çитес çур акине хатĕрленнин пĕрремĕш утăмĕ. Кайран пĕр пек условисенчех пĕрисем ытларах тухăç илме пултарнинчен тĕлĕнетпĕр.

Шурчасем малалла пăхса ĕçлесе кăçал кăна «АПКна аталантарасси» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 8,1 миллион тенкĕлĕх çĕнĕ техника туянчĕç. Вăл шутра çĕр улми лартмалли-кăлармалли техника, выльăх апачĕ хатĕрлемелли çĕнĕ йышши агрегатсем, 200 ĕне валлилĕх сĕт провочĕ тата сунă сĕте сивĕтмелли установка. Кун çумне хăйсен укçипе туяннă опрыскивателе тата çĕре тарăн кăпкалатакан ГН-2,5 агрегатсене хушсан, техника паркне çĕнĕваркăш кĕни куç умĕнчех. Укçа перекете юратнине техникăпа ĕçлекен кашни механизатор ăнланать, çавна шута хурса хăй ĕçленĕ техникăна управа лартасси çине те ответлăха туйса пăхать. Хуçалăх техникăна хĕллехи управа лартма 16 пин тенкĕ уйăрнă. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 6 пин тенкĕ нумайрах.

«АПК аталантарасси» приоритетлă наци проектĕнче пăхнă «Выльăх-чĕрлĕх отрасльне хăвăрт аталантарасси» пая пурнăçласа пĕлтĕр Шурчасем аш-какай, сĕт, сурăх çăмĕ туса илессипе пысăк чикĕсем палăртнăччĕ. Каламалла, пурнăçланчĕç вĕсем. Çулталăк вĕçĕнче Çĕньял Шурчари 5-мĕш çул А. Васильев ертсе пыракан сĕт ферминче сĕте пысăк сортпа сутса хушма тупăш тума сĕт линийĕ (молокопровод) ĕçлеттерме пуçларĕç.

– Нумай шутлатпăр, калаçатпăр, çав хушăрах кивĕлле ĕçлесен пурнăçран юлни пирки çывăха илместпĕр. Çĕннине куллен алла илсе пыракансем вара ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăваççĕ. Вĕсен экономика кăтартăвĕсем те малаллах каяççĕ. Çавсенчен тĕслĕх илес пулать те, – терĕ ферма заведующийĕ ферма ĕçченĕсем куллен шăпăрпа шăлса тирпейлесе тăракан сарайпа малалла иртнĕ май.

Паян выльăхсене хĕл каçарас тапхăр пырать. Ăна хатĕрленсе ӳсен-тăран отраслĕ ферма ĕçченĕсем валли утти-улăмне те, сенаж-силосне те, тыррине те çителĕклĕ янтăласа панă. Вĕсен лайăх пахалăхĕ ĕçлес туртăма ӳстерет кăна.

Тирпейлĕ упрама лартнă ял хуçалăх техники кун вăрăмланнине сиссе канлĕ управра ларать. Вăхăт нумаях та иртмĕ – вĕсем çур акине тухĕç.

**А. ПЕТРОВ.**

Вĕсем район историне тарăн йĕр хăварнă

# «Хисеп палли» орден кавалерĕсем

– Килĕр-килĕр, малалла иртĕр, эпĕ выльăхсене каçхи пуçтарса пӳрте кĕретĕп, – терĕ тĕл пулсан сывлăх суннă хыççăн хирĕç тулли витрепе тухнă Александра Федоровна.

Малалла иртетĕп. Пуçра вара историпе çыхăннă шухăш явăнать. Çакăнта çуралса ӳссе пурăннă-çке Çатракасси-Кашмаш тăрăхĕнче ырă йĕр хăварнă Анатолий Анисимович Анисимов.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçиччен, 1939 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă Анатолий ашшĕ аллинче нумаях выляса та юлайман. Çулсенчи арçын вăрçă вут-çулăмĕнче хыççăнхи ăрусен телейлĕ пурнăçĕшĕн çĕршыва фашистсенчен сыхласа пуç хунă. Çавăнпах Анатолий ачаран çĕр ĕçне çывăх ӳснĕ. Малтанах Çĕньял Хуракассинчи колхозра уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçленĕ. Тĕрлемери ял хуçалăх шкулĕнчен вĕренсе тухсан А. Фадеев ертсе пыракан «Свобода» хуçалăхра тĕп бухгалтерта вăй хума пуçлать, çав вăхăтрах Чăваш ял хуçалăх институтне куçăмсăр майпа агронома вĕренме кĕрет.

– Вĕренес, çĕннине пĕлес, унпа ĕçре усă курас туртăм пысăкчĕ унăн. Çакнашкал качча паллашрăм эпĕ 1964-1965 çулсенче ертсе пыракан кадрсене вĕрентекен шкулта хам та унта вĕреннĕ май. Малтуртăмлăскер, пурнăç аталанăвĕнчен юлас мар тесе тăрăшатчĕ те, ял хуçалăх институтне экстерно вĕренсе пĕтерчĕ, Муркаш районĕн К. Сазонов ертсе пыракан ял хуçалăх управленийĕнче ĕç тӳлевĕпе ĕçлекен экономист пулса ĕçлеме вырнаçрĕ. Ял хуçалăхĕ вăл вăхăтра çĕкленӳ çулĕпе пыратчĕ, – аса илчĕ Шура инке пӳртре вырнаçнă сăн ӳкерчĕксенчен пирĕн çине пăхакан кĕрнеклĕ арçынпа калаçнă пек пулса.

Ял хуçалăх управленийĕнче ĕçленĕ хыççăн тепĕр хушă районти комсомол комитечĕн иккĕмĕш секретарĕнче хăйне ырă енчен кăтартнă специалиста 1968 çулта «Свобода» колхоз председательне суйлаççĕ. 11 çул пĕр улшăнмасăр ĕçлет вăл çакăнта, унччен тунă пурлăха ӳстерсе çĕр ĕç культурине малалла аталантарать. Хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх отраслĕ те, ӳсен-тăран культурисен вăрлăхне туса илесси те малалла пысăк утăм тăваççĕ. Унăн вăл вăхăтри ĕмĕчĕсенчен пĕри Кашмашпа Çатракасси хушшинче культура центрĕ туса икĕ яла çыхăнтарасси пулнă. Унăн ĕçне малалла тăсакансем икĕ яла чăнах та



çыхăнтарчĕç. Халĕ кунта çĕкленнĕ çĕнĕ урамсем хуçалăх хăватне кăтартаççĕ.

Хыççăнхи çулсенче Анатолий Анисимович хатĕрлев кантурĕн тата пахча çимĕçпе улма-çырла комбиначĕн директорĕсенче ĕçлесе çак отрасльсене районта аталану вăйĕ парать. 1983 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă тата çак отрасле сахал мар çĕнĕлĕх кĕртнĕ арçын пирĕнтен ĕмĕрлĕхех вăхăтсăр уйрăлса каять, анчах унăн ячĕ паянччченех халăх асĕнче.

– Икĕ хĕр ӳстертĕмĕр эпир мăшăрпа. Эльвира та, Светлана та паян пурнăç çулĕ çине тухрĕç ĕнтĕ. Вĕсем хăйсем суйласа илнĕ ĕçĕсенче ашшĕ ятне ямасса шанатăп, – терĕ самантлăха шăпланса Александра Федоровна.

Сăмах май, Шура инке те район аталанăвне тарăн йĕр хăварнă хĕрарăм. 1939 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнчи колхозник çемйинче çуралнăскер, вăл та ашшĕне Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çухатнă. Шкул пĕтерсен хĕр агронома вĕренсе тухать те çак ĕçре ĕмĕрне ирттерет. Чылай çул пирĕн районти вăрлăх инспекцине ертсе пырать, тивĕçлĕ канăва тухсан та 4,5 çул районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕнче вăй хурать.

– Паян час-часах вырăнсенче пурнăç йывăрлăхĕпе хăйсем ĕçлесе çитерейменнине картлама тăрăшаççĕ. Кун пек çулпа малалла каяймăн. Вырăнта ĕçлемесен нацпроект тенипех ял хуçалăхĕ çирĕп ура çине тăраймĕ. Вырăнсенче ĕçлесен тĕреклĕх пулнине эпĕ паян «Свобода», «Герой», Ильич яч. хис., «Восток», «Ударник», Суворов яч. хис., «Оринино», Чкалов яч. хис. хуçалăхсен тĕслĕхĕсем çинче куратăп, – терĕ хамăр калаçăва паянхи кунпа çыхăнтарса А. Анисимова.

Ĕçри хастарлăхшăн Анатолий Анисимовича та, Александра Федоровнана та çĕршыв «Хисеп палли» орденсемпе наградăланă. Шура инке тата 1991 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнченпе – «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ». **Хамăр инф.**

Тăрăшуллă ĕç коллективĕсенче

# Тĕп вырăнта – пахалăх



**Кирпĕч завочĕн тĕп бухгалтерĕ Р. Антонова (варринче) хăйĕн çумĕпе Н. Михайловапа (сулахайри), расчетсен бухгалтерĕпе Н. Волковапа тата О. Морозова кассирпа черетлĕ шутлав ирттереççĕ.**

Çапла пĕтĕмлетрĕм эпĕ Муркашри кирпĕч заводĕнчи ĕçсемпе паллашса тухнă май. Каламалла, заводра ĕçлекенсем те калаçура час-часах пахалăх ыйтăвне малти вырăна кăларчĕç.

– Потребительсем паян хак çине мар, пахалăх çине пăхаççĕ, – терĕ хамăр калаçу вăхăтĕнче завод директорĕн çумĕ Ю. Петров пĕлтĕрпе кăçал продукци илекенсем М-150 маркăллă паха кирпĕче ытларах ыйтма пуçланине палăртса. – Технологие вĕçне çити тытса пыманран ку маркăллă кирпĕче малтан кăларайман. Халĕ кунта çирĕп йĕрке турăмăр та – пăр тапранчĕ. Ку маркăллă кирпĕчпе пĕрлех эпир М-100, М-125 маркăллă кирпĕчсене те кăларатпăр. Нихăшĕ те складра нумай выртмасть.

Кирпĕч завочĕн продукцийĕ юлашки çулсенче районпа республикăсăр пуçне Чулхулана, Мускавпа Хусана, Йошкар-Олапа Чикмене нумай кайма пуçларĕ. Пĕлтĕр кăна завод 11111,11 пин штук кирпĕч кăларса 66 миллион тенкĕлĕх тавар çаврăнăш турĕ. Ку вăл виçĕм çулхин 260 процентĕ! Районти предприятисем хушшинчи чи сумлă ӳсĕм.

– Кăçал продукци кăларассине проект хăватне çитерме (14,8 миллион штук кирпĕч) тĕллев лартрăмăр. Пахалăха çӳллĕ шайра тытса çак чикĕне парăнтарма пирĕн майсем пур. Ĕçлекенсем те çителĕклĕ, пĕри тепринчен маттуртарах та пуçаруллăрах, – кăмăллă калаçать Юрий Иванович завод цехĕсемпе иртнĕ май.

Урамри складсенче вара суйласа хунă кирпĕчсем хăйсене туянакансене кĕтеççĕ. Акă Мускава каймалли пысăк автомашина кран айне пырса тăчĕ. Нумаях та вăхăт иртмĕ – вăл тулли прицеппа инçе çула тухĕ, пысăк пахалăхлă Муркаш кирпĕчи тĕп хуламăрти стройкăна çул тытĕ.

– Çителĕклĕ саппас пулни клиентсен ыйтăвĕсене вăхăтра тивĕçтерме май парать. Ку вара пирĕн марка! – терĕ бухгалтери ĕçченĕсемпе черетлĕ ыйтăва сӳтсе явнă май кирпĕч завочĕн тĕп бухгалтерĕ Раиса Антонова.

Малта пыма çĕнĕлле шутлани кирлĕ çав. Çĕнĕлĕх ӳсĕм çулĕпе тӳр килет.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Туслă çемье çĕнĕ тĕллевсемпе ĕçлет.**

Саламлатпăр



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, Актай ялĕнче çуралса ӳснĕ, Йӳçкассинчи аптекăра 1963 çултанпа ĕçлекен **Перасковия Ильинична ИЛЬИНАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Юратнă çыннăмăра çав тери ĕçчен те тӳрĕ чунлă пулнăран, эпир хамăр та çак тĕнчере хăватсăр маррине, телейлĕ пулнине туятпăр. Пурнăçăр тулăх та вăрăм пултăр. Иксĕлми вăй-хал, тулли телей, кулленех хĕвеллĕ те çутă кун, пархатарлă çирĕп сывлăхпа ĕмĕрхи ыр кăмăллăх сунатпăр, хисеплĕ Перасковия Ильинична.

**Сире хисеплесе Муркаш тата Йӳçкасси аптека ĕçченĕсем.**



Кармăш ялĕнче пурăнакан **Денис Геннадьевич ОДИНЦОВА** февралĕн 12-мĕшĕнче 20 çул тултарнă тата январĕн 19-мĕшĕнче мăшăрланнă ятпа саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, çемьере яланах килĕшӳ, тулли телей сунатпăр.

**Пысăк салампа Корнеевсен тата Одинцовсен çемйисем.**

---

Юратнă мăшăра, аннене – Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакан **Людмила Андреевна КОРНЕЕВАНА** 45 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Сан ялан хавас кăмăл пултăр, пит-куçунта çепĕç кулă çиçтĕр. Утас çулу такăр пултăр.

**Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, мĕн пур тăванĕсем.**

Санăн çыннусем, район

# Малашлăха пăхса ĕçленĕ

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн халăх хуçалăхĕ ура çине тăнă çулсем... Ĕç фрончĕ çапăçу хирĕнчи майлах пулнă, анчах никам та мана йывăр тесе алă усман.

– Вут хутма вăрмантан çĕклемпе вутă-шанкă йăтни те, кĕсьене пĕр уçă тырă илсе килсен судпа айăплани те, вулама-çырма хут-кăранташ çукки те, сивĕ пӳртре çăвăнмасăр пыйтăланса-шăркаланса кайни те, яра кунра ача-пăча аслисемпе пĕрле çурлапа тырă вырни те, каçхине вара краççын çуккипе уйăх çутинче кĕнеке вулани те пирĕн пурнăçра пулнă, – аса илеççĕ иртнине паян пурăнакан районти энергетика ветеранĕсем. Машина мĕнне пĕлмен энергетиксен вăл вăхăтра çывăрма вăхăт пулман: талăкĕ-талăкĕпе киле каймасăр ĕçленĕ. Çапах унччен хăйă çутинче пурăннă ялсене çутă кĕртнĕ. Тайма пуç теес килет паян манăн вĕсене. Сирĕн паттăр ĕçĕрпе ачăрсемпе мăнукăрсем савăнаççĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре районти ветеран-энергетиксем (сулахайран сылтăмалла): М. М. Башмаков, Г. Н. Игнатьев, В. С. Бардасов, В. П. Семенов, В. Т. Смирнов, Н. В. Любимов тата Е. В. Романова музей ертӳçи.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

